К84.09(=Чув)
А65
Ч-411108

МИХАИЛ АНДРЕЕВ

# ШУРШУ ВĂЙЙИ



Национальная библиотека ЧР

4-041108

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

К84.09(2=Чув)
А65

Обязат. экз.

Михаил АНДРЕЕВ

# ШУРШУ ВĂЙЙИ

*Купăс парăр-ха алла –*
*Янратса ярам пĕрре!*
*Çунатланнă кăмăла*
*Яр уçса парам сире.*

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2007

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
А 65

7-41108
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО
2019 ОКТ 2017

Андреев М.А.
ШУРШУ ВĂЙЙИ. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2007. – 80 с.

© Андреев М.А., 2007.

*Хамăр таврари чи чаплă*
*купăссăсене халаллатăп.*

Автор



# ШУРШУ ВӐЙИ
## Поэма



Хӗрсем вӑййа тухсассӑн та,
Хӗрсем вӑййа тухсассӑн
Килет вӑйӑ илемӗ.
*Чӑваш халӑх юрри*

Вӑйӑҫ алли ырмасан
Ташлакансем ырас ҫук.
*Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ*

Шуршура купӑсҫӑсем,
Тен, ун чух кашни ҫуртрахчӗ.
Чаплӑччӗ вӑйӑҫӗсем,
Пӗринчен тепри ӑстаччӗ.

«Шуршура кашни ратне
Шукӑль вӑйӑ пуҫтарайӗ»... –
Тетчӗҫ эп ача чухне.
Халь ӑна кам ас тӑвайӗ?

Пасарта Шуршу кӗвви
Яланах унччен шутраччӗ.
Шуршусен юрри-сӑвви
Чӗрене хӑват паратчӗ.

Салтака каякансем
Шуршулла янӑратсассӑн
Макӑратчӗҫ пуль хӗрсем,
Улшӑнатчӗ, тен, ман сассӑм.

Пирӗн ял та шуршуллах
Юрӑсем янраттаратчӗ.
Тутӑрпа сулла-суллах
Салтака яшсем каятчӗҫ.

Салтаксен такмакĕнче
Хурлăх мар, вăй-хал вĕретчĕ.
Харсăрлăхчĕ вĕсенче,
Çавăнпа чунра – хĕлхемччĕ!

Хурлăхлă маттурлăхпа
Çамрăксем тапăртататчĕç,
Хăратсассăн та шăпа,
Пурпĕр паттăрăн юрлатчĕç.

Тен, унпа герой нумай
Пирĕн районта, чăнах вĕт.
Кăшт сыпсан кашни Чапай...
Шикленессине пит ан кĕт.

Тен, Чапаев хушамат
Пирĕн таврараан пуçланнă,
Туканаш енчен хăват
Пуçтарса инçе саланнă?

Чăннипех Туканашра
Пурăннă ĕçчен, хастар йăх.
Шарасем ăна вара
Панă хушамат – Чапаев.

Тăрăшатчĕ Куснарта
Фельдшерта маттур хĕрарăм.
Вăл Туканашран унта
Килнине манса каймарăм.

Вăл Чапаевăччĕ те,
Ыйтасах килетчĕ манăн.
«Сирĕн йăх хăш ĕмĕрте
Ку хушамата туяннă?»

Хуравлатчĕ вăл: «Тахçан...
Паллă мар мана. Пĕлетĕп:
Асатте купăспалан
Туслăччĕ пĕр çитмĕлте те.

Вăл вăййа шуршусемпе
Çамрăк чух пĕрле çӳренĕ.
Хамăр ен кĕввисемпе
Савăнса нумай киленнĕ»...

Бутяков* та Шуршуран. –
Чăвашран пĕрремĕш паттăр.
«Ылтăна» вăл чи малтан
Тивĕçнишĕн мухтанатпăр...

Вăл та купăсçă пулнах.
Хăй те пирĕн йăхранах вăл.
Сăн ӳкерчĕкĕ – умрах.
Амăш çеç ларать хăраххăн...

Юхĕ-ха салтак юрри,
Манăн тус пуçласшăн ташă.
Купăса кама юри
Калама тыттармалла-ши?

Тен, çак Тихăн Юрккине?
Купăсне калать вăл маçтăр.
Унăн ташă кĕввине
Эпир пурте кăмăллатпăр.

---

* Сергей Николаевич Бутяков танкист чăвашсенчен чи малтан – 1940 çулта – Совет Союзĕн Геройĕн ятне илнĕ (вилнĕ хыççăн).

Пурпĕрех вăл пиччĕшне
Çитеймест. Маттурччĕ Еркка.
Ас тăвать ун вăйййине
Шуршури библиотека...

Туканаш чиркĕвĕнче
(Хальлĕхе те вăл клубах-ха).
Хĕллехи уявсенче
Никама памастчĕ маххă.

Вăл тытсан хут хупăса
Çĕн вăй-хал пырса кĕретчĕ.
Çĕнĕрен хавхаланса
Ташăра яш çын сикетчĕ.

Унăн шухă пӳрнисем
Вирхĕнсе вылянăçемĕн
Çепĕç, шукăль кĕвĕсем
Янăратчĕç вут-хĕлхемлĕн.

Тăрăшатчĕç сар хĕрсем
Çăмăлраххăн ташламашкăн.
Ташлама тухманнисем –
Шуххăнраххăн ал çупмашкăн.

Кашни хĕлĕх çинçĕшне
Вăл ачаш чунпа туятчĕ.
Юркка хăйĕн пиччĕшне
Савăнса пăхса ларатчĕ.

Иккĕшĕ те яштака.
Иккĕшĕн те çӳçĕ хăмăр.
Юрататчĕç турника,
Чупкалатчĕç йăпăр-йăпăр...

Иккĕшĕ те футболист.
Ермолай тата туристчĕ,
Йĕлтĕрçĕ, волейболист,
Ачасемшĕн чăн кумирччĕ.

Купăса та вăл ялан
Савнă тус тесе шутлатчĕ.
Унпала каламасан
Пыл çимен пек тунсăхлатчĕ.

Шоркинран та лайăхрах
Калассишĕн хĕмленетчĕ.
Акатуй пуçлансанах
Ун хитре кĕвви кĕрлетчĕ.

Çук халь чаплă гармонист.
Ӳпкине рак чирĕ çирĕ.
Кайрĕ шухă футболист...
Пирĕн çамрăклăх кумирĕ.

Купăса вăл калама
Сар Ваççилирен* вĕреннĕ.
«Тонсемпе» аппаланма
Еркка ун патне çӳренĕ.

Хăвăртах маттур ача
Кĕвĕсем катма пуçланă...
Кайнă ашшĕ Карача,
«Шуйски» ун валли туяннă.

---

* Василий Гаврилович Петров Куславккари автофургон комбинатĕнче нумай çул ĕçленĕ.

Шкул пĕтернĕ тĕлнеллех
Каччă шуххăн ташлаттарнă.
Минкĕшрен киленмеллех
Каçсерен вăл вăйă сарнă...

Эп Ваçук кĕввисемпе
Хам та шутсăр киленеттĕм.
Калаçмасăр хĕрсемпе
Вĕсене тăрса итлеттĕм.

Майăн 9-мĕшĕнче –
Лăпкă мар ман чун хавалĕ.
Вăйă – кўлĕ хĕрринче,
Пирĕн ташă фестивалĕ.

Çутăччĕ Шуршу кўлли.
Çамрăксем кашта хăпартнă.
(Тупнă хĕпĕртемелли!)
Каштине йăлт капăрлатнă.

Ромб туса, тутăрсемпе
Вĕренне хитрелентернĕ.
Пит шăлли тĕррисемпе
Каштана чечеклентернĕ...

Тухнă пĕтĕм ял вăййа.
Таврашран та йышлăн килнĕ.
Пурте Тăххăрмĕш Мая
Ир-ирех, тен, аса илнĕ...

Пысăк вăйă картине
Хĕрĕсем илемлĕн тăнă.
Сивĕрех, тен, вĕсене,
Çўп-çўхе тумпа, тен, шăннă.

Ал çупса хĕрӳленме
Пурте хытă тăрăшаççĕ.
Итлесе хитре çемме
Каччăсем ташша васкаççĕ.

Виç-тăватă яш кăна
Хĕрсене ура тапаççĕ.
Ку енче çапла сана
Ташлама чĕнсе тухаççĕ.

Ретрисем шартлаттарса
Ал çупаççĕ килĕнӳллĕн.
Хĕрĕсем хитрен шуса
Çаврăнаççĕ килĕшӳллĕн.

Акăшсем пек, тан пăхса,
Алсене пит сулламасăр
Савăнаççĕ ташласа
Сар хĕрсем хăлаçланмасăр.

Пирĕн ял вăййисенче
Ташăра хĕрсем сăпайлă.
Аллисен вылявĕнче,
Тен, вĕсем лезгинка майлă.

Ывтăнмаççĕ талпăнса,
Сумлăн çын çине пăхаççĕ.
Пилĕке тӳп-тӳр тытса
Пĕчĕккĕн юхса пыраççĕ.

Купăсçи вара тарлать,
Пулăшасшăн параппанçă
Мук тирне панлаттарать,-
Пăхăр: вăл та музыкантçă!

Часах-часах лата лартса
Иккĕн-виççĕн «хăвалаççĕ».
Вăйă тăтăр янраса! –
Маçтăрсем пĕрле калаççĕ.

Чăнкăрман ансат сасси
Палăрать кăшт – тинкĕл-тинкĕл...
Мĕн вăл тимĕр çапасси
Çапкăçĕ пулсан та никель!

Аллуна хут купăса
Санăн маçтăррăн тытасчĕ!
Чаплă кĕвĕ каласа
Çынсене савăнтарасчĕ!

Тăрăшать асли, маттур!
Пур ун кĕвĕ хыççăн кĕвĕ.
Лапама пытаннă юр
Кăлармасть пĕр сасă-чĕвĕ.

Кўлĕ тĕкĕрĕ çинче
Тутăрсем вĕл-вĕл вĕçеççĕ – ...
Яштака кашта çинче
Шăпăл-шăпăл вĕлкĕшеççĕ.

Питĕ кăмăллă çынсем.
Вăйă-кулă çĕкленўллĕ.
Сар хĕвел сапать хĕлхем.
Хумханать хаваслăн кўлĕ.

Пăшăл-пăшăл мăшăрсем
Айккинче пăхса тăраççĕ.
Тин тĕл пулнă тăвансем
Хĕпĕртўллĕн калаçаççĕ.

Хăнана ушкăнсемпе
Вăйăран кайса килеççĕ.
Урамра çын утнипе
Курăксем те кĕскелеççĕ...

Вăйă-кулă саланать.
Каштана йăвантараççĕ.
Хĕрупраç чупса анать –
Тутăрĕсене суйлаççĕ.

Кӳлĕ тунсăхлăн юлать,
Кай енче саралнă шуçăм...
Çырмана тĕтре анать,
Çăлтăра кĕтет ман куçăм.

Каç пулсан та Шуршура
Янăрать ирччен хут купăс.
Савăнать ял вăйăра
Вăрттăн спонсор пулнăн тункăс...

* * *

Вăрмана шалча касма
Сахал мар çӳренĕ эп те.
Тытăнатпăр суйлама –
Ку начар тет тусăм Петя.

Хăшкăлатăн шыраса
Яштака çӳп-çӳллĕ ăвăс.
Çывхарать тул çутăлса –
Çук шалча, суйлавĕ кăткăс.

Тиркешеççĕ юлташсем.
Тупнине пăрахăçлаççĕ.
Йĕпенеççĕ урасем –
Ӳхĕсем пиртен «кулаççĕ»...

Çутă хурт выртать умра
Сар ахах пек! Чарăнатпăр.
«Светлячок!» – тесе вара
Пĕшкĕнсе ăна сăнатпăр.

Çутăлса çитсессĕн çеç
Шалчана йăтса килетпĕр.
Ӳт, тум-тир – йĕпеннĕ веç,
Хамăр пурĕпĕр шӳтлетпĕр.

Аслă вăйă вĕçленсен
Шалчана сутса яратпăр.
Тупăннă укçипелен
Пысăк «четвĕрт» туянатпăр.

Пухăнса çырма хĕрне
Çамрăксем ăна ĕçеççĕ.
Тĕл пулма хĕрĕсене
Хăвăртрах клуба вĕçеççĕ.

Шалчана хитрелетме
Пуçтараттăмăрччĕ тутăр.
Хĕр патне киле кĕме
Хăракан яш каччă çук-тăр.

Таврăнаттăмăр илсе
Тĕреллĕ пит шăллисем те.
Вĕсемпе чиперлетсен
Курăнать шалча – ĕçсен те...

Каштана хитрелетсе
Тăратма ытла та йывăр:
Ывăннăччĕ-ха тесе
Килӳнте нумай ан çывăр.

Тутӑрсем ҫӗлес пулать
Вӗренне майлаштарсассӑн.
Чӗр кашта мӑнтӑрланать
Ешӗл хунавсем ҫыхсассӑн.

Ырламастчӗҫ парткомра
Вӑйӑ тунине пӗрре те.
Йышӑнатчӗҫ бюрора
Шалчана туртса илме те.

Аслӑ вӑйӑ каштине
Ҫамрӑксем куҫ пек сыхлатчӗҫ.
Ун ҫине ҫулпуҫ сӑнне
Рамӑпа вырнаҫтаратчӗҫ.

Каштана ҫапла тусан
Тӳнтерес текен те ҫукчӗ.
Мӗн пулать йӑвантарсан?
Ӑнланатчӗ влаҫ «улпучӗ»...

Ун пекки нумай пулман.
Кашниех вӑййа кӗтетчӗ –
Фестивальччӗ вӑл ялан,
Савӑнӑҫ илсе килетчӗ.

* * *

Шуршусем чылай чухне
Ҫырмара «пуху» тӑватчӗҫ.
Минкӗш тӑвайккин айне
Тутӑрсем пырса ҫакатчӗҫ.

(Тӗмшерсем «пуху» тесе
Халиччен вӑййа каланӑ.
Шалчана илемлетсе
Энӗш хӗрринче ташланӑ).

Аманик, Пилешкасси,
Пакăшпа Тĕмшер сăмахĕ
Илтĕнсен паллашасси
Уявра пит йывăрах-и?

Шуршусен вăййи вара
Минкĕшсен вăййи пекехчĕ.
Çилсĕр, ешĕл лапамра
Пирĕн çĕр çинче иртетчĕ.

Шуршусен унта пыма
Юхăм урлă каçмаллаччĕ.
Меллĕрех утса каçма
Хăмасем те хумаллаччĕ.

Минкĕшсем вара вăййа
Пухăнса анатчĕç йышлăн.
Килнĕ пек Акатуя
Хăйсене тытатчĕç чыслăн.

Шуршусем пĕрре унта
Каçхине те вăйă турĕç.
Юхăм урлă шыв-шурта
Чиперех каçма май тупрĕç.

Юр чылайччĕ таврара,
Пур çĕрте те шыв шавлатчĕ...
Тĕттĕм марччĕ çырмара,
Уйăха тĕтре хуплатчĕ...

Шуршусем йыхăрнипе
Аннăччĕ вăййа эпир те.
Çăлтăрсемсĕрччĕ тӳпе,
Пурпĕр савăннăччĕ питĕ.

У-41108
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

Юрий Тихонов пире
Купăспа çунатлантарчĕ.
Кĕвĕсем ярса хире
Вальс хĕрӳллĕн ташлаттарчĕ.

Танго, чарльстон, фокстрот
Янăратрĕ вăл маттуррăн.
Чаплăччĕ кашни аккорд,
Пурччĕ çав таланчĕ Юрăн!

Куйбăш, Лукия Коли,
Николаева Тамара,
Аля, Клава Людмили
Пынăччĕ пĕрле хастаррăн.

Гром Вали, Ваççа Коли,
«Гаврилюк», Шмелева Валя,
«Василюк», Таник Толи
Ку вăййа манман-ши халĕ?

«Симĕсчĕ ун чух эпир,
Шкулсенче çеç вĕренетпĕр.
«Пулĕ-ха Сетнер, Нарспи
Пирĕн те»,- тесе çӳретпĕр.

Пулчĕç çĕн паллашусем,
Чĕресем кайран пăлханчĕç.
Тупрĕç тус хăш-пĕрисем,
Тăвансем пек çывăхланчĕç.

Çав романтикăллă каç
Асăмран нихçан тухмарĕ.
Эй, яш-кĕрĕм, хĕрупраç!
Çамрăк вăхăт ырлăх мар-и?

* * *

Ай тет, вай тет,
Чуна хĕпĕртеттерет.
*Тупмалли юмах*

Пурте пĕлнĕ виртуоз
Мясников Юркка пиччеччĕ.
Эфирпа, тен, пин колхоз
Ун кĕввисене итлетчĕ.

Çӳçĕ йăвăччĕ, кăтра,
Хăй илемлĕ те кĕрнеклĕ.
Пулнă теççĕ Шуршура
Вăл Орфей пекех хисеплĕ.

Мăнкуна-и е Мая
Амăшĕ патне килсессĕн
Тухнă вăл каçхи вăййа
Юрă-кĕвĕ итлемешкĕн.

Асилсе иртнисене
Яшсемпе сăмах вакланă.
Çамрăксен кĕввисене
Вăл профессор пек тăнланă.

Хăй мухтавлă баянист,
Гастрольте Римра та пулнă.
Ак кунта – ялти «артист»
Пуррипех ун кăмăл тулнă.

Мясников студент чухнех
Шăпăрлансене пуçтарнă.
Чăн учитель евĕрлех
Вĕсене урок вăл панă.

Ч-41108
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

«Ларăр. Шăп. Эп ак епле
Ку чĕлĕхсене пусатăп...
Кĕввĕме итле-итле
Çепĕçлĕхшĕн тăрăшатăп...»

Шуршури шкул ачисем
Юрикрен пĕрмай вĕреннĕ,
Çавăнпа ăна вĕсем
Çитĕнсен те хисепленĕ.

Каçхине пĕр вăйăра
Вăл хитре юрра итленĕ.
Çивĕтлĕ хĕре вара:
– Камăн «шăпчăкĕ» ку? – тенĕ.

Каламан леш. Шикленсе
Хăвăртрах таçта çухалнă.
Ун ятне артист пĕлсен
Вăрçасран иккен хăранă.

«Шăпчăк» ашшĕ ят чухне
Чунĕне çĕн влаçшăн çуннă.
Мясниковăн çемйине
Ссылкăна яртарнă пулнă.

Мясниковĕ тавăрман.
Тавръансан çĕн çурт çĕкленĕ...
Кивĕ çуртĕнче кайран
Хĕрĕх пĕр çул шкул ĕçленĕ.

Юрий ашшĕн кил-çуртне
Каялла тавăрттармарĕ.
Ял библиотекине
Çав çурта вăл халалларĕ.

Халĕ те унта çынсем
Кĕнеке-хаçат вулаççĕ.
Çывхарсассăн уявсем
Музыкăпала ташлаççĕ.

Мясников кĕввисене
Çухатмасть радиостуди...
Итлесессĕн вĕсене
Çĕн çўп-çап пек «руди-муди»...

Кирлĕ пек ун чух пире
Аннесем юрланă юрă,
Хуть клубра, хуть ĕçкĕре
Ташă-юрăри культура.

* * *

Асăмра – Исаевсем:
Энтриян, Витали, Коля –
Хăшĕччĕ-ши вĕсенчен
Ташă çеммисен королĕ?

Эп Витали вăййине
Уявра нумай чух илтнĕ.
Кĕввисем ман чĕрене
Ырлăхпа яланлăх витнĕ.

Купăса Исаевла
Çĕкленўлĕхпе калас тăк
Ан тăрмаш эс пустуйла –
Пултарулăх кирлĕ класлă!

Николайĕччĕ тата!
Кандидатчĕ вăл, доцентчĕ.
Пит ăстаччĕ, тупата,
Талантпа тĕлĕнтеретчĕ.

Хăй вара (каллех кăтра!)
Яштака, вăр-вар та сумлă.
Вăйăра е уявра
Тем тытсан та пултаруллă.

Унăн та Шуршу кĕвви
Шутсăр янкăс та хитреччĕ.
Çамрăклăх, вăй-хал теми
Кĕввинче пит хисепреччĕ!

Коля, арăмĕ вилсен,
Шур хĕрне пĕрмай тухатчĕ.
Шурăмпуç шураличчен
Пĕр-пĕччен унта ларатчĕ.

Хăш-пĕр чух баян тытса
Кĕвĕсем хуллен калатчĕ.
Арăмне, тен, асăнса
Çын курман чух макăратчĕ.

Ун чухне вăл пенсире,
Утмăл çул кăна тултарнă...
Калаймаççĕ тӳпере:
Ма çынна пĕччен хăварнă?

Çур çултан вăл хулара
Хăй çине ал хунă терĕç,
Пытарсан тĕп масара
Пурте, тет, хыт ĕсĕклерĕç...

Арăмне юратнипе
Пĕр пĕччен пурăнайман вăл...
...Терт ан ятăрччĕ тӳпе,
Турăпа Апостол Павăл!..

* * *

Йынӑшать, макӑрать,
Пӗтӗм ӑша ыталать.
*Тупмалли юмах*

Эпӗ те хут купӑса
Калама пит юрататӑп.
Таврӑнсассӑн ыванса
Час-часах ӑна тытатӑп.

Купӑспа аппалансан
Пуҫ канать иккен. Манатӑн
Хуйхӑ-суйхӑна. Аван
Музыка вӑйне туятӑн.

Кӗвӗсем эрешлеме
Эп шуршусенчен вӗрентӗм.
Юрӑ-кӗвӗ итлеме
Ҫиччӗрех вӑййа ҫӳрерӗм.

Минкӗш ялӗ – вӑрӑм ял –
Тӑсӑлса ларать ик ҫухрӑм.
Сӑрт ҫинче вӑл. Эп вӑййа
Ҫавӑнтан хаваслӑн чупрӑм.

Лапамра ларать Шуршу.
Айккинче ун – ҫутӑ кӳлӗ.
Шуршулла калас тӑк – шур,
Ҫаврака та илӗртӳллӗ.

Минкӗш сӑрчӗ – умӗнче,
Пӗр енче – чипер юманлӑх,
Кӗмӗл шыв – ун айӗнче.
Ырӑ та хитре тавралӑх.

Сăрт çинчен пăхсан Шуршу –
Йывăçлă, чипер çуртсемлĕ.
Çук кунта дзю-до, у-шу,
Пĕчĕк ял – таса, илемлĕ.

Шкулсăр та медпунктсăр вăл...
Пур çăлкуç, библиотека,
Минкĕш сăртĕнчен çав çăл
Пăрăхпа юхать тӳлеккĕн.

Те çĕр çул, те хĕрĕх çул
Пурăнать Шуршу лавккасăр.
Çăл патне каçма та çук
Пăрăхпа юман хумасăр...

Ялĕнче ик ярт урам.
Хыçалти урам – пĕр енлĕ.
Сылтăмра – каллех лапам,
Анăç енĕ – çырмасемлĕ.

Çак ялта, çак таврара
Янăрнă ялан хут купăс.
Купăсçисене вара
Пĕлнĕ тет тахçан çур вулăс.

Халĕ те унта пĕтмен
Ылтăн ал – чăн-чăн ăстаçă.
Вăййине илтме тивсен
Савăнатăн калама çук.

Пурччĕ Хветисса Коли,
Вăл та селĕм сĕрекенччĕ...
Маçтăрччĕ Кăтра Толи,
Унăн та алли хĕлхемччĕ...

Пит хитре Фролов Микул
Вăйăра ташлаттаратчĕ.
Шел, ăна кĕске кун-çул
Тӳпери сыхлавçă пачĕ.

Хветисса Колийĕ, эх,
Чаплă «профи» пек ăстаччĕ.
Хăй, Кăтра Санюç пекех,
Шухă, типшĕм те лутраччĕ.

Леш кăтра, ку – яп-яка...
Пӳрчĕсем те хире-хирĕç.
Кашни кун пĕр курăках
Ирĕксĕр курмашкăн тивĕç...

Купăспа ăмăртмалла
Сахал мар вĕсем каланă.
Вăйăçсен мĕн тумалла?
Пĕр-пĕрне шӳтпех ăнланнă...

Ĕçкĕре Кăтра Санюç
(Вăл инке енчен тăванччĕ)
Киличчен шур шурăмпуç
Купăспа юрлаттаратчĕ.

Вăл клубра ташлаттарни
Халĕ те ман асăмрах-ха.
Ун чухне – те çăварни –
Нихăш те паманччĕ маххă.

Уявра вăййа тухсан
Мăшăрĕпеле илемлĕн
Йăлтăркка купăспалан
Вăл пыратчĕ – куç илеймĕн!..

Хветисса Коли алли –
Те вӗл-вӗл шăрçа пухатчӗ –
Купăспа ташламалли
Пит çӗкленмелле калатчӗ.

Купăсран шăрçаласа
Кӗвӗсем вăл кăларатчӗ.
Эп итлеттӗм савăнса,
Хыçăмра, тен, ик çунатчӗ.

Ман пиччем те салтака
Кайнă чух унпа юрларӗ,
Уямасăр пылчăка
Пар лаша ун чух тарларӗ.

«Çăка çул-çи çав-ра-каа,
Тат-са ил-се пул-ма-рӗ!
Эп ка-я-тăп сал-та-каа,
Лайăх шă-па тух-ма-рӗӗ»...

Вырсарни кун пасарта
Ӗçлӗ халăх туллиехчӗ,
«Купăсçи епле ăста!
Вăт маттур!» – тесе киленчӗ.

Йышлăн ларнă лав çинче
Ман пиччем тăрса пыратчӗ.
Питшăллийӗ мăй çинче,
Куçӗпе хӗрне шыратчӗ.

Сумлăн тутăр сулласа
Вăл та юрă янраттарчӗ.
Карачран Анаткаса,
Тен, сасси çитсе саланчӗ.

Эп хĕрхентĕм пиччене –
Аннепе вăл тăлăх ӳснĕ.
НЭП пĕтернĕ ашшĕне,
Вăрçă чух та хурлăх тӳснĕ.

Çиччĕрех лаша кӳлме
Вăл колхоз станне çӳренĕ.
Пысăк çын пек ĕçлеме
Пĕчĕклех иккен вĕреннĕ.

Килнĕ чух Акатуйран
Вăл аварие çакланнă.
Çăлăннă аран-аран:
Хырăмран ун чух аманнă.

Йывăрччĕ кун-çулĕ ун,
Пысăк пӳллĕ пулаймарĕ...
Хăлхара кайран виç кун
Шав салтак юрри янрарĕ...

Канашра комиссирен
Ваньăна киле ăсатрĕç...
Тин ман пĕчĕк чĕререн
Хуйхă хăпрĕ, тупрăм канăç...

Хветисса Колипелен
Унтанпах эп çывăх пултăм.
Купăсне итле-итле
Савăнтăм, хурлантăм, култăм.

* * *

Ялсемпе уй-хирсене
Çĕн çулта çĕн юр ӳксессĕн

Эп поселок керменне
Кайнăччĕ парне илмешкĕн.

Эп ун чух вун пиллĕкре.
Шкулăмра отличникреччĕ.
Çуннăшăн вĕренӳре
Ман балра киленмеллеччĕ.

Эп Шуршу хĕрĕпеле
Çав маскарадра паллашрăм.
Пакăш пикипе пĕрле
Елка умĕнче ташларăм.

Галя ятлă хĕрача
Маловсен кил-йышĕнченччĕ.
Вăтанмастчĕ вăл пачах,
Шӳтлеме-кулма пĕлетчĕ.

Шурă юр кайса пĕтсен
Шуршусем шалча тăратрĕç.
Шалчине хăпартиччен
Питĕ селĕм капăртлатрĕç.

Тĕрлĕ тĕслĕ парăспа
Бригантина ишнĕ евĕр
Тухрĕ куç умне шалча
Юмахри пекех, туссемĕр.

Тутăрсем вĕлкĕшнине
Хамăр ялтанах эп куртăм.
Минкĕшрен Шуршу енне
Туссемпе хаваслăн утрăм.

Вăйă кӳлĕ çумĕнче
Сулхăн кун йĕркеллĕ иртрĕ.

Чупрĕ çил хумсем çинче,
Çырана та сивĕ витрĕ...

Темиçе хĕр ун чухне
Манăн куçсенчен каймарĕç.
Галя терĕм иккĕшне,
Ыттисем асрах юлмарĕç.

Шăпăл-шăпăл вĕлкĕшсе
Тутăрсем те ал çупатчĕç.
Каччăсем вара сиксе,
Хĕрсене савса ташлатчĕç.

Кудряшова Гальăна
Эп ун чух пăхса килентĕм
Кĕп-кĕрен кĕпи ăна
Пит килĕшнипе хĕмлентĕм.

Шел, вăл аслăччĕ манран,
Эп ун хыççăн çӳремерĕм.
Кӳршĕ пулчĕ вăл кайран,
Эп ăна «инкеçĕм» терĕм.

Алексеев Шурика
Юратса качча вăл тухрĕ.
Эп кайсассăн салтака
Шурик Атăлта куç хупрĕ...

Тепĕр хĕрĕ елкăра
Маларах паллашнăскерччĕ.
Ун чухне вăл вăйăра
Ташламалăх çитĕнменччĕ...

Пурпĕр эп ялан ăна
Çывăх çын тесе шутлаттăм.

Ыр сунатчĕ хĕр мана,
Вăл ют маршăн савăнаттăм.

Каярах Шупашкарта
Тĕл пулсан та калаçатчĕ.
Гальăпа ман йăмăк та
Питĕ туслă хĕрачаччĕ.

Маловсен çемйи вăййа
Хисепленĕ те юратнă.
Хĕрлĕ орденлă Мая
Чысласа чуста хăпартнă...

Вăрçă хыççăн пуçласа
Тутăра Малов пуçтарнă.
Вăрманта шалча касса
Тăрăшса капăрлаттарнă.

Унтанпа пĕр аллă çул
Шуршура ирттерчĕç вăйă.
Юхрĕ шыв, тĕпренчĕ чул...
Халь прогресс. Çутмаççĕ хăйă.

Шел, никам вăййа чĕнмест,
Шуршура шăпланчĕ кўлĕ...
Çамрăклăх яла килмест.
Кам ялта пўрт лартĕ ўлĕм?

* * *

Палан – палан пат та пат,
Пилӗк пӳрне шалт та шалт.
*Тупмалли юмах*

Кӳлӗ ҫумӗнчи килте
Пурӑнать Петров Василий.
Халь ӗнтӗ вӑл ҫитмӗлте.
Ырӑ ҫын – йӑваш та пиллӗ.

Вӑтӑр-вӑтӑр пилӗк ҫул
Кӗввисем асра ҫӳреҫҫӗ.
Вӗсене манма та ҫук –
Яшлӑха куллен чӗнеҫҫӗ.

...Пӗр ар ҫын, кӗрнеклӗскер,
Сак ҫинче ларса ерҫӳллӗн
Купӑспа «хывса кӗпер»
Кӗвӗсем калать хӗрӳллӗн...

Ҫӳҫӗ ҫырӑ, сарӑрах
Ҫуллӗ мар хӑй, мӑйӗ тарлӑ.
Сирпӗнсе ташламаллах
Купӑсне калать хастарлӑн.

Туйӑнать кӗввисенче
Хӗр тӗрри, сурпан эрешӗ.
Ик-ҫӗр ҫын – ун ҫумӗнче,
Хӑш вырӑнсенчен-ши лешӗ?

Туканаш, Анчӑккасси
Шуршу ялӗшӗн ют-и-мӗн?
Вӑйӑра савӑнасси
Юр кайсан юнра пуль пирӗн.

Ман савни те çакӑнта.
Калаçмасть манпа. Шыв сыпнӑ...
Айккинерех тӑнӑ та
Юлташне хулран вӑл тытнӑ.

Пултӑр, ан калаçтӑрах.
Эпӗ купӑсçа итлетӗп.
Чаплӑ маçтӑр – ман умра,
«Шуршулла» вӗриленетӗп!

Мӗнлерех вӑл çаврӑмсем
Эрешлет пусса вут-хӗмлӗн!
Ак ӑçта çӗн тӗслӗхсем
Вӗренсе ларма хам тӗллӗн.

Тин вӑл хулӑн сассипе
Çемӗсем кастарчӗ шуххӑн.
Самантран çинçисемпе
Çаврӑмлӑн ӑсатрӗ юхӑм...

Е тепре вӑл варринчен
Чӗлӗхсем уçса хӑюллӑн
Кӗвӗ пухрӗ сассенчен
Хӑвӑрт-хӑвӑрт – ӑмӑртуллӑн!

Чарӑнмасӑр пӳрнисем
Килӗшӳлӗхре ташлаççӗ.
Ылмашаççӗ кӗвӗсем,
Çӗн эрешлӗн таврӑнаççӗ...

Кармунисчӗ ритмпа
Сикӗнсе калать хӗрӳллӗн.
Урипе тапа-тапа
Янратать пит çӗкленӳллӗн.

Шукăль тĕрĕллĕ саппун
Пилĕкрен çыхса вăл янă.
Янăрать кармунĕ ун
Чĕр çитти çинче ташланăн.

Ăслă чăвашсен йăли –
Шăлавар ан турткалантăр...
Шăранать ташламалли,
Çил те çук, тӳпе те янкăр.

...Пĕчĕкçĕ Васук киле
Пĕр-пĕччен юласшăн марччĕ.
Аппăшĕ ăна пĕрле
Урама илсе каймастчĕ.

Ашшĕн купăсне Васук
Иккĕрех пырса туртатчĕ.
Шел, ăна йăтма май çук.
Купăса кашни сыхлатчĕ.

Вĕрентетчĕç пурте: «Эс
Ан тыт купăса. Вататăн».
Пĕчĕкки итле пĕлмест:
«Пик-пикпе калас кет манăн».

Кăшт ӳссен, пĕччен чухне
Вася купăса «вăрларĕ»:
Тĕм хыçне – çерем çине
Сĕтĕрсе ăна васкарĕ.

«Купăсçăн» çамки хура,
Янаххи çинче те хăрăм.
Хăй чикан пекех вара,
Калас çук: «Ку пĕчĕк вăрă».

Люба аппăшĕ киле
Таврăнчĕ – ун шăллĕ çуккă.
Кил пушах. Тĕлĕнмелле!
Тарнă «тĕрмерен» Ваççутка.

Люба тухрĕ пахчана.
Чĕнчĕ – сад хуравламарĕ.
Тухрĕ хĕр укăлчана,
Шăллĕне çапах курмарĕ.

Кăшкăрчĕ: «Ваçук! Ваçук!
Эс ăçта? Эп килнĕ. Таврăн!
Шăп. Ниçтан та сасă çук.
Эх, ăçта-ши халь мăнтарăн?»

Лапамри мунча енчен
Инструмент хуллен сас пачĕ.
«Музыкант» унта иккен.
Любăна ку савăнтарчĕ.

Люба купăс сассипе
Шăллĕне нумай хут тупрĕ.
Леш «концерчĕ» пĕтнипе
Аппăш хыççăн сиввĕн утрĕ.

Малашне Ваçук килтен
Тарнă тăк – Любовь пĕлетчĕ:
Шăллĕ аякра çĕтмен,
Купăспа шур патĕнчеччĕ...

Ашшĕнчен Ваççа пичче
Купăс калама вĕреннĕ.
Ашшĕ нимĕç вăрçинче
Хĕрĕхмĕшсенче çӳренĕ.

Сусăрччĕ Кирле пичче –
Урине фронтра хăварнă...
Пуç усман – алкумĕнче
Купăсне вăл шăрантарнă.

Кĕçĕн ывăлĕ Ванюк
Хамăр яш чухне ман тусчĕ.
Халь ăна курма та çук –
Ĕçлеме юта вăл юлчĕ.

Мари Эл çыннисене
Купăспа савăнтарать пуль.
Йошкарсен ачисене
Баяна хăнăхтарать вăл...

Куславккан пĕр класĕнче
Партăсемĕр юнашарччĕ.
Ун чухне тăхтавсенче
Вăл манпа калаçаканччĕ.

Халь Иван Гаврилович
Мари Енĕн музыканчĕ.
Пĕлтĕр пултаруллăн пит
Троицăра юрлаттарчĕ.

Ун чухне вăл Шуршуна
Килнĕччĕ чечек хумашкăн...
Ялти пĕтĕм тăвана
Уявра курса каймашкăн.

Инкĕшĕ, Матюк аппа,
Ун ăсталăхне мухтарĕ.
Баянист хут купăспа
Чаплăн сĕрнине ырларĕ.

Шел, ялта тахҫанхилле
Чаплӑ вӑйӑ кӗрлемерӗ.
Лантӑш ҫеҫ, ӳксе кӳлле,
Хурлӑхлӑн ишсе ҫӳрерӗ.

Ман кумир, Ваҫҫа пичче,
Шур хӗрне те анаймарӗ.
Хӑйӗн ҫутӑ пӳртӗнче
Купӑсне те калаймарӗ.

Сыпӑсен чирӗпеле
Заводра чух вӑл паллашнӑ,
Ҫавӑншӑн килте хӗлле
Ӑшӗнче нумай туллашнӑ.

Хаклӑ шӑллӗн вӑййине
Вӑл куҫҫуль чӗртсе итлерӗ.
Хӑйӗн чаплӑ купӑсне
Килӗнчех ӑна пиллерӗ...

Эпӗ те киле ҫитсен
Сас пӗрмисене вылятрӑм,
Пӗтӗм кӑмӑл туличчен
Кив хут купӑса янратрӑм.

* * *

Йӗлтӗрпе чупма Ванюк
Ҫамрӑк чух ялан хавасчӗ.
Ярӑну, «хыр-чӑрӑш», «плуг»[1]
Енӗпе те вӑл ӑстаччӗ...

---

[1] Йӗлтӗрҫӗ техникин элеменчӗсем.

Çырмапа хир çумĕнче
Ларнăран вĕсен кил-çурчĕ
Ваня ăмăртусенче
Яланах яш чух маттурччĕ...

Йĕлтĕрпе чăнах нумай
Çамрăк Ваня аппаланнă.
Тренировка тунă май
Организмĕ аталаннă.

Вăл мана ăмăртура
Минкĕшре вăшт çеç çĕнтерчĕ.
(Эп кайран Куславккара
Призсăрах пит çӳременччĕ).

Вăл студент пулса тăрсан
Эпĕ ун патне каяттăм,
Унпала пĕрле баян
Общежитире тăсаттăм.

Вăл мана нотăсене
Тăрăшуллăн вĕрентетчĕ,
Музыка факультетне
Пединститутра пĕтерчĕ.

Етĕрне ен хĕрĕпе
Туслашса ялта туй турĕ.
Шуршура, тен, çĕрĕпе,
Ун чухне янрарĕ юрă.

Етĕрне чиперĕсем
Килнĕччĕ хушпу-тухьяллăн.
– Çуталатчĕç тенкисем –
Туй кунне ăçтан-ха манăн?

Йалтăркка Шуршу кӳлли,
Кĕтлĕм шывĕ, Минкĕш варĕ
Савăнса киленмелли
Селĕм вырăн пулчĕ мар-и?

Хĕр енчен килнисене
Шуршусем те тĕлĕнтерчĕç.
Чаплă купăсçисене
Шеллемесĕр «ĕçлеттерчĕç»...

Етĕрне райкомĕнчи
Пысăк çын ун чух каларĕ:
«Ваньăн пĕтĕм купăсçи
Чăн артист пек тыткăнларĕ».

Харăссăн та ун чухне
Шуршусем тем чул янратрĕç.
Хамăр ен кĕввисене
Вĕçтерсе инçе салатрĕç...

Шел, çулталăк каялла
Ваня мăшăрĕсĕр юлчĕ...
Арăмĕ рака пула
Ăнсăртран телейсĕр пулчĕ...

* * *

Пурăннă Петров Çемен,
Шуршулла – Куçма Çеменĕ.
Унăн йăхĕ ĕлĕкрен
Купăса пит хисепленĕ.

Шăллĕ те – Кĕтӳç Санюç –
Лайăх купăсçă, такмакçă.

Туканаш, Ватнер, Вăлпуç
Çыннисем ăна манмаççĕ.

Вăрçă хыççăн çак Çемен
Чаплă вăйăçă шутланнă.
Вăл кĕвве пĕрре илтсен
Купăспа тӳрех каланă.

Пĕчĕклех ăна хĕрсем
Улаха илсе çӳренĕ –
Вăрçă вăхăчĕ: яшсем
Çумĕнче тĕнче кисреннĕ...

Урокра лармалласкер,
Вăл хăш чух салтак ăсатнă.
Пирĕн пĕчĕкçĕ «Сетнер»
Вилĕм номерĕ ташлатнă.

Вăл ăсатнă ял-йышран
Миçе çын ютра пуç хучĕç!
Килеймерĕç вăрçăран,
Хĕрĕсем те туссăр юлчĕç...

Ӳснĕ, çитĕннĕ Çемен.
Çурнă вут, йĕкел те пухнă...
Юр кайсассăн, kaççерен
Купăспа вăййа та тухнă.

Халăх Пакăш вăййине
Тройскире пуçтарăнсассăн
Вăл янратнă хромкине
Шуххăн-шуххăн, çитмĕл саслăн.

Икçĕр метрти вăрман
Сăрт çинчен ăна тăнланă.
Купăс пек юрлайманран
Шăкăлчи те, тен, ăмсаннă.

Кайăкĕ, тен, кĕвĕçмен,
Пакăш хĕрĕсем ăмсаннă.
Çак ялта Петров Çемен
Селĕм хĕр тупса авланнă.

Хĕрĕ пулнă пит яштак,
Хурлăхан пек хăмăр куçлă...
Мăшăрĕ – лутра пăртак,
Типшĕм мар; хура сăн-пуçлă.

Унăн купăсĕн сасси
Шăплăха сирсе ярсассăн
Килнĕ хăвăрт ташласси.
Çывăрас килмен ял касĕн.

«Курăнса килмест куçа»... –
Тет инкек çинчен сăмахлăх.
Самосвал çак купăсçа
Уйăрнă пиртен яланлăх...

Эпĕ авланиччченех,
Вăтăртах, ăна пытарнă.
Ячĕ ун паянччченех
Тантăшĕсенче упраннă.

Ун пирки кулянниπех
Хуняçи те вилчĕ пулĕ.
Карчăккин те çав куннех
Кĕмсĕрт! татăлчĕ кун-çулĕ.

Пĕр кунтах ик тупăка
Çав килтен çынсем кăларнă.
Юнашар пĕр шăтăка
Ĕмĕр-ĕмĕрлĕх антарнă.

Типшĕм питлĕччĕ старик,
Çырăрах уссиллĕскерччĕ.
Пулнăччĕ вăл фронтовик,
Гимнастеркăпа çӳретчĕ.

Пысăкчĕ, кукăрăлма
Тытăнни кăшт палăратчĕ.
Кӳршĕрен «сăмах юрма»
Хуньăмсен патне пыратчĕ...

Мăшăрĕ, Плаки аппа,
Чăн хăмла çырли ăстиччĕ.
Пасара вăл пуракпа
Утакан чи паллă çынччĕ...

Çемене аса илсе
Ман умра та кулянатчĕç.
«Питĕ маçтăрччĕ»,- тесе
Купăсçа чунтан ырлатчĕç.

Заводран ĕçрен килсен
Вăл больницăна васканă.
Хĕрĕ йывăр чирлесен
Ашшĕ йалт канăçсăрланнă.

Хулари кĕпер çинче
Тӳснĕ терт Çемен пиччемĕр.
Ĕçнĕ «рокер» кĕленче... –
Петровсем манаймĕç ĕмĕр...

Пакăшра эп вĕсемпе
Кашни çу пĕрле канатăп.
Туслă, йышлă çемьепе
Паллашнишĕн савăнатăп.

Пахчасем юнашартан
Пĕр-пĕрне курса ĕçлетпĕр,
Вăхăт-вăхăт, ывăнсан
Чăшăлти сăра ĕçетпĕр.

Петровсем Куславккара
Ашшĕн купăсне сутмаççĕ.
«Шуйскине» кив арчара
Хаклă мул пекех упраççĕ.

Пакăшпа Шуршу вăййи
Йĕс чĕлĕхсенче усраннăн
Тĕлленет те, пўрт мăрйи
Туйăнать йĕрсе уланăн...

Пил сана, Çемен пичче!
Масарта эс канлĕ çывăр.
Çул та хĕсĕк çĕр çинче...
Çавăнпа сăмахăм йывăр.

* * *

Купăс сасси илтĕнсен
Кĕрхи каç та илемлĕ.
*Александр Артемьев,*
*чăваш халăх писателĕ*

Хутлă-хутлă хутаçлă
Хура сăран атăллă.
*Тупмалли юмах*

Хурлăха çăмăллатма
Йалтăркка баян тытам-ха.
Кил, юлташăм, юрлама.
Тус пулсан тăвар та – сахăр...

Эс манман-и, Шуршура
Вальссене епле калатчĕç?
Сар хĕрсем çаврăнура
Мĕнлерех вĕçсе пыратчĕç!..

Дунайпа Амур шевли,
Хурăнпа Маньчжури сăрчĕ
Купăсçăсенче кули
Тек илтĕнмелле мар хăрчĕ?..

Янратам-ха шуршулла
Ташламашкăн вăрăм кĕвĕ.
Уçмасассăн кăмăла
Чунăма çуллах юр хĕвĕ.

Минкĕшри Пилеш Коли
Шуршусем пекех калатчĕ.
Ман унран вĕренмелли
Эпĕ çамрăк чух нумайччĕ.

Пакăш яшĕ – Хур Мишши
Купăса епле ăстаччĕ!

Вăл виçшер сехет хушши
Вăйăра савăнтаратчĕ.

Халь те Гусев Михаил
Виртуоз – чăн-чăн эрешçĕ...
Кирлĕ мар ăна этил:
Вăл ĕçмест – кашни пĕлеççĕ.

Вăл пайтах концертсенче
Купăспа каларĕ пулĕ.
Туйăнать ун вăййинче
Юрий Мясниковăн «шкулĕ».

Çутă кăтрашка çÿçпе
Ўсрĕ хăмăр куçлă каччă.
Çитĕнчĕ амăшĕпе.
Пĕвĕ унăн пысăк марччĕ.

Çиччĕмĕш класа çитсен
Вăл ялти чи паллă яшчĕ.
Савăнаттăм итлесен –
Купăса маттур калатчĕ.

Хулпуççийĕсем патвар.
Урисем те унăн çирĕп.
Хăй пĕрре те çўллĕ мар,
Çыпăçуллăччĕ тумтирĕ.

Çÿçĕ Мишăн яланах
Пушкинăнни пек кăтраччĕ.
Поэтран вăл лутрарах,
Çутăрах пек туйăнатчĕ.

Иртнĕ ĕмĕр варринче
Ялсенче хаваслă пулнă.
Кашни каç, тен, клубсенче
Çамрăксем ташлană – кулнă.

Гусев Миша Пакăшра
Ун чухне тĕп гармонистчĕ.
Паттăрскер, вунтăваттăра
Яшсене ташлаттаратчĕ.

«Русский Миша» псевдоним
Ун ятне сумлантаратчĕ.
Ашшĕ вырăс пулнă-шим?
Маншăн ку паллах та марччĕ.

Клуб тулли яш-кĕрĕме
Купăспа вăл савăнтарнă.
Чăваша хисеплеме
Кĕвĕпе хавхалантарнă.

50-мĕш çулсем пĕтсен
Пакăш клубĕ салхулланчĕ.
Паспорт кĕсьене кĕрсен
Çамрăклăх ялтан саланчĕ.

Канмалли шăматкун çеç
Çамрăксем клубра чылайччĕ.
Филармонири «чĕкеç» –
Пакăшшăн ун чух Мишшаччĕ.

Каччăн шукăль вăййинче
Туйăнатчĕ чăн ăсталăх.
Миша чунăм варринче
Юлчĕ ĕмĕр асăнмалăх...

Вăл кайран Шупашкарта
60 çулчченех ĕçлерĕ.
Штангăна – савса спорта –
Ăмăртусенче çĕклерĕ.

Илчĕ тĕрлĕ парнесем,
Пулчĕ пысăк «шўлкемеллĕ»...
Пурпĕр ылтăн алăсем
Юлчĕç сисĕмлĕ пўрнеллĕ.

...Ак ларать вăл вăйăра
Купăса тăсса илемлĕн.
Янăраççĕ ращара
Кĕввисем хитрен, хĕлхемлĕн.

Сирпĕнеççĕ каччăсем
Ташăра сиксе хастаррăн.
Ал çупаççĕ хĕрĕсем.
Пурте хĕрнĕ шĕл-кăварăн.

Михаил кĕввисемпе
Ват çынла хуллен ташлаймăн.
Вĕç те çаврăн çемĕпе –
Пĕртте савăнăçсăр каймăн.

Миша вăл хут купăспа
Пирĕн академикехчĕ.
Çын чунне музыкăпа
Хăвăрт тыткăна илетчĕ.

Ун вăййин эрешĕсем –
Пирĕн чун сассин илемĕ.
Хамăр ен чăвашĕсем!
Чаплă пирĕн юрă-кĕвĕ!

Музыкант – ученăйсем
Венгрире те тĕлĕнеççĕ:
Мясниковăн кĕввисем
Чăн шедеврсем-çке теççĕ.

Шоркина та мухтаса
«Уникум» тесе калаççĕ.
Кăткăслăхне ăнланса
Пĕтеймесĕр пуç ватаççĕ.

Тихонов Ермолая
«Примăсен» шутне кĕртеççĕ.
Куславкка енчи вăййа
Статьясем çырса тĕпчеççĕ.

* * *

...Çапăçман-ха Хусана
Илессишĕн вырăс çарĕ –
Илемлетнĕ шалчана
Чăвашсен маттур патварĕ.

Чăвашсем сĕм авалах
Шалчана чиперлентернĕ.
Чечексем куç уçсанах
Савăнма вăййа вĕçтернĕ.

Чысласа чăваш тĕнне
Çут çанталăка пуç тайнă.
Ĕлĕкхи йăласене
Пĕлнĕ сыхлама сăпайлăн.

Вăрăм ĕмĕрсем хушши
Шуршура та вăйă тунă.

Вырӑс чиркӗвӗн ӑшши
Уншӑн пӗр сиенсӗр пулнӑ.

Пирӗн ен чӑвашӗсем
Савӑннӑ ялта илемлӗн.
Тӗслӗх пулнӑ шуршусем
Ҫӳресе эртел-эртелӗн.

Атӑлпа чугун ҫултан
Инҫе мар пурӑннипе те
Пурнӑҫран кая юлман,
Аптраман музыкипе те...

Акӑ мӗн аса илет
Антонина Яковлевна.
(Вӑл Серовӑпа ҫӳрет.)
Куҫ умне тухать ҫак сцена.

Вӗлкӗшет Ҫӗньял вӑййи...
Шуршусем унта та ҫитнӗ.
Хӑнасен вун-вун ҫемйи
Уявра хавас сӑн-питлӗ.

Иккӗн-виҫҫӗн шуршусем
Купӑссем ярса тытаҫҫӗ.
Хӗпӗртӳллӗ кӗвӗсем
Харӑс янратма пуҫлаҫҫӗ.

Йышлӑн килнӗ хӗрӗсем
Черетпе ташша тухаҫҫӗ.
Мӗн тери хастар вӗсем,
Яшсене ӑмсантараҫҫӗ.

Кĕписем кашнин шап-шур –
Шупашкар ансамблĕнчи пек.
Каччисем епле маттур!
Ташламашкăн пур халь ирĕк!

Шуршусем çитсен çапла
Вăйă туххăм вăйланатчĕ.
Пĕтĕм кĕвĕ шуршулла
Çĕкленӳллĕн янăратчĕ.

Ерка купăс каласан
Сирпĕнетчĕ чун хĕлхемĕ.
Вăйăран эпир кайсан,
Тен, чакатчĕ ял илемĕ.

Пакăшри Тройски валли
Çĕлететтĕмĕр çĕн платье.
Пурте шакăр пĕр тĕсли,
Кĕписен асрах-ха халь те.

Минкĕш вăййине кайма
Урăх сăнлăччĕ тумсемĕр.
Кĕренпе ташша тухма
Пит хаваслаччĕ туссемĕр.

Каччăсем вара пире
Таçтанах курса тăратчĕç.
Ушкăнпа тухса хире
Йăсатмашкăн тăрăшатчĕç.

Иртрĕç пирĕн вăхăтсем.
Пухăнмасть Шуршу вăййи те.
Савăк мар халь уявсем,
Пурнăç улшăнать-çке питĕ.

Çыннисем халь урăхла.
Çимĕк мар – эрех ĕçеççĕ.
Хăшĕсем тăр кăнтăрла
Сулланса кăна çӳреççĕ.

Турă илттĕрччĕ пире.
Çын ан ĕçтĕрччĕ уявсăр.
Çамрăк йыш пур çемьере
Ӳстĕр кăмăллă та харсăр.

Шел, Шуршу пĕтсе пырать.
Пит кичем унта чун сачĕ.
Ĕмĕт пурпĕр кăшкăрать:
«Ял чĕрĕлнине курасчĕ!»

* * *

Кудряшов Виталипе
Эп хальччен мĕн чул киленнĕ!
Вăл шур тĕрĕллĕ кĕпе
Тăхăнса вăййа çӳренĕ.

Хумлă хăмăр çӳçлĕскер,
Яштакаччĕ вăл, хитреччĕ,
Баянпа та пит чипер
Кĕвĕсем сирпĕнтеретчĕ...

...Тĕрĕллĕ кĕпе, костюм
Тăхăнса вăййа вăл аннă.
Ун çинче – вĕр-çĕнĕ тум,
Хăвасем çумне хăй ларнă...

Купăсне янраттарать,
Çамрăксем хĕрсе ташлаççĕ.

Параппан панлаттарать.
Вăйăҫа кашни мухтаҫҫĕ.

Кудряшов Виталь Сергейч
Выляма килте вĕреннĕ.
Ашшĕ купăс тыттăр ҫеҫ –
Вăл умра ларса итленĕ.

Кудряшов Сергей пичче
Кĕтлĕмре кĕтӳ кĕтетчĕ.
Кĕмĕлччĕ – ҫӳҫĕсенче...
Хăй ҫапах патвар ҫӳретчĕ.

Кĕтлĕм вăл – сĕвек ҫырма,
Ачасемшĕн пĕчĕк Атăл.
Унта лайăх пул тытма,
Минкĕшрен те курăнать вăл.

Совхозра Виталь Сергейч
Сварщикра нумай ĕҫлерĕ.
Халь вăл пенси ҫынни ҫеҫ,
Анчах ... медик кавалерĕ.

Арăмĕ, Тоня аппа,
Лайăх тухтăр, ыр хĕрарăм.
Халь те ҫамрăк хăватпа
Приема ҫӳрет хастаррăн.

* * *

Пăчкă Мĕкĕте Толи,
Сăрт енчи Тайкка Алюшĕ
Юрă-кĕвĕ мĕн тĕрли
Пĕлнĕ пирĕн хĕпĕртӳшĕн.

Сахал мар ташлаттарса
Иккĕшĕ те савăнтарнă.
Сахал мар юрлаттарса
Савнисемшĕн хурлантарнă.

Халь пĕр çамрăк та шкулта
Çук хут купăс калаканĕ.
Ачапчи те çук ялта,
Пур ик-виçĕ Ваня, Маня.

Ĕлĕкхи тухать умма
Кӳлĕри шыва пăхсассăн.
...Пурте тухнă савăнма
Шур патне ун чух хаваслăн.

Янăранă тенкĕсем,
Тухьясем çиçсе çуталнă.
Шур кĕпеллĕ çамрăксем
Кӳлĕ хĕрринче ташланă.

Алла-аллăн тытăнса
Çаврăннă юрланă майăн.
Кӳлĕ выртнă савăнса
Çăлтăрсем çутса нумаййăн...

Савăннă вăл вăйăра
Сар хĕрсем пайтах пулнишĕн.
Ăмăртуллă ташăра
Каччăсем йăл-йăл кулнишĕн.

Çăлтăр питлĕ çамрăксем
Шуршура пайтахчĕ ĕлĕк.
Чупса иртрĕç вăхăтсем
Тĕлленмерĕм-ши ыр тĕлĕк?

Хăпаратчĕç шуршусем
Минкĕше хĕлле нумайййăн.
Янрататчĕç кĕвĕсем –
Ташшипе вĕçсе, тен, кайăн.

Виç Толя, Хĕлип Алюш,
Юрикпе Тайкка Алюшĕ
Купăса тытсан как хуш
Савăнаттăмăр пĕр хушă.

Хĕрĕсем те Шуршуран
Хăпаратчĕç те хаваслăн
Пирĕн йывăç клуб ялан
Кĕрлесе тăратчĕ чаплăн.

Купăса Кăтра Толи
Хăйĕн аллине илсессĕн
Савăнмастăмăр кули,
Хĕпĕртеттĕмĕр вилессĕн!

Ах, хĕрӳллĕччĕ вăййи!
Аллисем вут-хĕм тĕрлетчĕç.
Унăн пĕтĕм идейи
Клавишсем çинче сикетчĕç.

Вăл сап-сарă çӳçлĕскер,
Çӳллĕ мар кĕрнеклĕ яшчĕ.
Куçĕсем ун сеп-сенкер.
Ывăнми хастар чăвашчĕ.

Вăл та тĕреллĕ кĕпе
Çу çитсессĕн тăхăнатчĕ.
Ман ăна юратнипе
Тен, çунат ӳсселаратчĕ.

Эп ун пек пулас тесе
Тĕрĕллĕ кĕпе шыраттăм,
Аслă Хусана çитсе
Туянса килме шутлаттăм.

Сувенир лавккисенче
Наци тумĕсем пайтахчĕ.
Шел, финанс уй-хирĕнче
Эп ун чух вăйсăртарахчĕ...

* * *

Сĕт сăватчĕ фемăра
Çамрăк хĕр – Фролова Галя.
Хисепреччĕ таврара,
Ас тăвать çуралнă ялĕ.

Çак хĕре Кăтра Толи
Чунтанах килĕштеретчĕ,
Тутансассăн аншарли
Юттисем патне çӳретчĕ.

Галя хытă кӳренсе
Тольăна тилмĕрттеретчĕ,
Çывăрма ирех кĕрсе
Шăппăн-шăппăн ĕсĕклетчĕ.

Толя купăс каласа
Кантăк умĕнче тăратчĕ.
Хăйĕн айăпне туйса
Каçарма хĕртен ыйтатчĕ.

Каçхине пĕррехинче
Толя хытă тĕлĕнтерчĕ:

Купăспа хапха çинче
Юрă-кĕвĕ тĕрлеттерчĕ.

Галя амăшĕ ăна
Шалчапа хуса антарчĕ...
Толя пурпĕр Гальăна
Мăшăрĕ тума пултарчĕ.

Килĕшӳллĕччĕ вĕсем,
Кӳршисем те ăмсанатчĕç,
Туслăн пурăнччăр тесе
Пурте-пурте ыр сунатчĕç.

Халь вара Кăтра Толи
Купăс калама пăрахнă.
Юратать тет аншарли,
Пурăнать килте хăраххăн.

* * *

Шуршура халь шӳлкеме
Тупăнмасть пĕр арчара та.
Кăмăл çук ӳпкелеме,
Эп пĕлетĕп, ăнланатăп...

Тенкĕллĕ тухьясене
Йывăр чух сутса пĕтернĕ.
Е партарнă çар фондне...
Е влаçсем туртса илтернĕ...

Çĕр-шыва хӳтелеме
Тенкĕсем те кирлĕ пулнă...
Колхозсем йĕркелеме
Пуянран та чухăн тунă.

Çук хушпу ялта. Пустуй
Вĕсене халь шырани те.
Çĕнĕлле тăваççĕ туй.
Вырăсланчĕç пурте питĕ.

...Хăпарать тăкăрлăкран
Тусăм Николай Демьянăч.
Вăл килет Куславккаран,
Чунĕнче ун çуккă канăç.

Çак хастар ар çын унччен
Пысăк должноçра ĕçленĕ.
Инженер пулнипелен
Ялсене нумай çӳренĕ...

Халь вăл питĕ кулянать
Совхозсем йăлтах пĕтнишĕн.
Ӳкĕннĕ пек калаçать
Хăй хут купăссă марришĕн.

– Шуршура, тен, эп кăна
Купăса вĕренеймерĕм.
Вĕрентмерĕç-ши мана?
Те эп хам ыйтма пĕлмерĕм.

Тăвансем – музыкантсем,
Пурте питĕ пултаруллă.
Темшĕн манăн пӳрнесем
Çамрăк чух патак пек пулнă.

Эп вĕренĕттĕм те, тен,
Купăса пĕрмай тытсассăн.
Шел, аттем фронтран килмен.
Плугпала çураттăм касă...

Купăспа каланине
Эпĕ шутсăр юрататăп.
Минкĕше çӳренине
Халь те лайăх ас тăватăп.

Селĕмччĕ унта хĕрсем,
Еплерех яштакчĕ Галя...
Иртрĕç савăк вăхăтсем,
Пенсире эп ĕнтĕ халĕ.

Пурпĕрех ялти вăййа
Пухăнасчĕ йышлăн-йышлăн.
Шел, чĕнни каять сая.
Пĕлтĕр те «все комом вышло».

Пухăнмарĕç уява,
Килсенче ларса ирттерчĕç.
Чысламарĕç канăва,
Кăмăлтан малта – икерчĕ... –

...Тунсăхлать иккен чăваш
Вăйăшăн, тăван сăмахшăн.
Аса илчĕ ман юлташ
Кăмăлне лăплантарасшăн:

– Пурччĕ Коля Иванов,
Мускавра вăл пурăнатчĕ.
Шуршува килсессĕн, ох!
Еплерех вăл савăнатчĕ.

Çӳллĕскер, яштакаскер,
Вăл Гагарин пек чиперччĕ.
Пулнă тет вăл инженер,
Яланах хитре çӳретчĕ.

Чаплă купăсçăччĕ хăй.
Чăвашла епле калатчĕ!
Аллинче ăсталăх, вăй
Пуррипе ăмсантаратчĕ.

Вăл Чăвашрадиона
Музыкишĕн кăмăллатчĕ.
Чун-чĕришĕн Кольăна
Пĕтĕм кўршĕ юрататчĕ.

Мускавра та купăса
Николай ялан калană.
Хамăрăн яла савса
Шуршусемшĕн тунсăхлană.

Кольăсен чие пахчи
Çўллĕ сăрт айне вырнаçнă.
Шăкăл-шăкăл шăкăлчи
Çав садра нумай калаçнă.

Çывăхри çăлкуç сасси
Илтĕнет унтан илемлĕн.
Тунсăхлă халь Сăрткасси.
Купăса часах илтеймĕн.

Николай çуралнă çурт
Кăларма пăрахрĕ тĕтĕм...
Иванов ялта халь çук.
Раменскинчине тин пĕлтĕм...

* * *

Тек нихçан Шуршу кӳлли
Вăйлă вăйăсем кураймӗ.
Пур-и хӗпӗртемелли?-
Иртнӗ вăхăт таврăнаймӗ!

Пурпӗр эпӗ чӗремре
Ун кӗввисене упратăп.
Концертра е пӳлӗмре
Купăса савса калатăп.

Пӗр мăнук ӳсет-ха ман,
Хромкăна хыт çухăртасшăн.
Хăй тин тухнă памперсран –
Купăса тытать вылясшăн.

Хамăр ен кӗввисене
Тен, ăна парса хăварăп.
Тен, аппан ачисене
Вӗсемпе эп туслаштарăп...

Видео, магнитофон
Пурте пур халь – çыр, тархасшăн.
Кашнинче – çав электрон...
Чӗр вăй мар, туссем, вăл маншăн.

Анатри Шуршу вăййи
Хăй вăл пурнăçчӗ, кун-çулччӗ.
Мӗн унта чăнни, суйи –
Асăмра çеç ӗнтӗ юлчӗ.

Пулӗç çӗн акатуйсем,
Сценăсем вăййа кăтартĕç.
Ку вăл йăлт – сценарисем! –
Чăнлăха синтетиклатĕç.

Ĕлĕкхи ваййа тепре
Хутшăнма телей килсессĕн
Кăшкăраттăм ĕшнере:
Чи хакли – тăван кĕтесĕм!

* * *

Салтак службин тăварлă.
*Ваттисен сăмахĕ*

Шыв хĕррине, сăрт-ту айне
Анат Шуршу вырнаçнă.
Карпатриллех, тăвайккине
Выртать сукмак мăнаçлăн...

Сăрт хĕрринчен çур çухрăмра –
Ем-ешĕл Пакăш варĕ.
Унта вун пилĕк минутра
Шуршу çынни хăпарĕ...

Сăртра кĕтÿç шартлаттарсан
Шуршуранах илтетĕн.
Шуршу автанĕ авăтсан
Пакăшранах сисетĕн.

...Тÿпе çаксассăн çурлине
Килтен хитре хĕр тухрĕ.
Тÿрех вăл илтрĕ: шур енне
Хут купăс чунĕ юхрĕ...

Хĕр пычĕ тăкăрлăк çумне,
Кĕвви епле илемлĕ!
Вăл çупăрлать хĕр чĕрине,
Шуршу çемми хĕлхемлĕ!

«Хут купăса Ванюк калать!» –
Хĕр шухăшларĕ ыррăн.
Пике чĕри кăрт-кăрт тапать,
Çӳрес килет маттуррăн.

Хĕр Пакăш Юманкасĕнче
Уткаласа çӳрерĕ.
Анчах та тек Шуршу енче
Кĕвве вăл илтеймерĕ.

Хĕр чунĕ путрĕ тунсăха:
«Ах, йăнăшрăм-шим эпĕ
Хитре кĕвве мĕн пулчĕ-ха?
Янрамĕ-ши вăл тепĕр?»

Çурла пек уйăх тӳпере
Чĕнмесĕр йăлтăртатрĕ.
Йăмрасене, яла, хире
Ылтăнĕпе çутатрĕ.

«Ванюк курма килеп тесе
Çыру çырса пĕлтерчĕ.
Ниушлĕ çитрĕ вĕçтерсе?» –
Тесе хĕр иккĕленчĕ.

Умра çерем йăлтăртатать,
Шыва хастар çăл куçĕ
Чарăнайми сăмах тăкать,
Инçе-ши шурăм пуçĕ?

Каллех хĕр тăкăрлăк патне
Хуллен утса çывхарчĕ.
Кам пит васкать-ха ун енне?
Сар хĕр канăçсăрланчĕ.

«Ах, – терĕ хайĕн ăшĕнче, –
Ку чим, ах, чим... ку çав вĕт»...
Моряк тăрать ун умĕнче.
Ак хăй кунта – «ялан кĕт»...

Ванюк матрос тумĕпеле:
Бескозырки шап-шурă.
Шевле вылять лентипеле,
Тăхи çиçет – культура!

Матросĕ çўллĕ, яштака,
Тăп чарăнса каларĕ:
– Ку эс-и, Валя? Моряка
Палламалла та мар-и?

– Палларăм эп сана, Ванюк! –
Хĕр хăвăрт хуравларĕ. –
Сана манса каймашкăн çук, –
Тесе хĕрўн каларĕ.

Хĕре ачашшăн хăй çумне
Çывхартрĕ те яш каччă
Пĕçертрĕ тусĕн тутине,
Чунне çунатлантарчĕ.

Вĕсем çўрерĕç шуçăмччен,
Çумма ларса калаçрĕç.
Ал пачĕç тухăç хĕрелсен,
Хаваслăн сыв пуллашрĕç.

Тепрехинче хут купăспа
Ванюк клуба хăпарчĕ,
Флотри чăн-чăн хастарлăхпа
Пурне те ташлаттарчĕ.

Вăл тепĕр каç та Пакăша
Хавхаланса васкарĕ.
Хур Мишшипе пĕрле ташша
Йĕркелесе вылярĕ...

Вылярĕ питĕ маçтăрла!
Шуршу ачи – мĕн тейĕн?
Хăй те ытла ăмсанмалла! –
Чăваш енри Есенин!

Кайран çӳрерĕ савнипе
Юманкасра хаваслăн.
Киле çул тытрĕ çӳл тӳпе
Салам ярсан алмазлăн...

Вăл Шуршура та каçсерен
Вăййа пырса каятчĕ.
Пĕрер ташлаттарса илсен
Пакăшалла васкатчĕ.

Вăл миçе каç шур хĕрринче
Хут купăсне янратрĕ.
Чи аслă алтăр айĕнче
Яш-кĕрĕме ташлатрĕ...

Валюç вăл купăс тытнине
Пакăшранах пĕлетчĕ...
Пырса уй калинкки патне
Кĕввисене итлетчĕ.

Е кӳршĕри Альбинăпа
Вăл урамра ларатчĕ,
Ванюк çитсен йăл кулăпа
Хĕр качăпа юлатчĕ.

Вĕçленчĕç отпуск кунĕсем.
Ванюк флотла тумланчĕ.
Хурланчĕç хăмăр куçĕсем,
Хĕре ку пăлхантарчĕ.

Ванюк каларĕ: «Кĕт мана
Тепре çулталăк çурă.
Ун чух эп вĕçлĕп службăна,
Вара кĕттермĕп урăх.

Санпа хаваслăн пĕрлешсе
Туй тăвăпăр телейлĕн.
Ыран эс пыр Тĕрлемесе,
Сыв пуллашар йĕркеллĕн.

Унтан – Хусан, вара – Мускав ,
Васкавлă поезд, Таллин...»
Ах, ĕнтĕ хатĕрччĕ хурав
Илемлĕ хĕрĕн – Вальăн...

* * *

Ыйтатчĕ Валя Ваньăран:
Хытах шавлать-и тинĕс?
Хăрушă-и тайфун тухсан?
Хăçан унта шыв симĕс?

«Эпир ансассăн шыв айне
Хум мĕнлине курмастпăр.
Хăш чух тухсан задание
Çӳле те хăпармастпăр.

Шыв айĕнче çӳрен кимме
Хăрушă мар çил-тăвăл.

Анчах та кубрика кĕме
Чăнах та, алăк тăвăр».

Моряк Мускав студенткине
Портсем çинчен калатчĕ,
Походсене çӳренине
Хăш-пĕр чух асăнатчĕ.

Ун чух янранă эфирта:
«Кариб, Гавана, кризис»...
Тĕнче вăйлатнăччĕ флота,
Ракетăллăччĕ тинĕс...

«Приказ килетчĕ час-часах
Ялан пулмашкăн хатĕр...
Çывраттăмăрччĕ пăлхансах.
Стартра тăратчĕ катер...

Ялан сана аса илсе
Эп вăранса каяттăм.
Халь кризис иртрĕ-ха тесе
Майĕпенех лăплантăм», –

Тесе шутарнăччĕ Ванюк
Калаçнăçемĕн канлĕн.
Эстоние хурлассăм çук,
Таса хула – кив Таллин»...

Хĕр ыйтнăччĕ унран тата:
«Мĕнпе вăл илĕртӳллĕ?»
Ванюк каланăччĕ: «Унта
Çурт тăррисем пит çӳллĕ...»

Хӗр кулнӑччӗ: «А мӑрйисем?
Пит пысӑк-и? Лутра-и?
Яш хушнӑччӗ: «Унта хӗрсем
Яштак, хитре те лайӑх...

Анчах та ман ак ҫак савни
Мӗнпур хӗртен илемлӗ.
Вӑл маншӑн, тен, тӳпе парни,
Вӑл ман кун-ҫул хӗвелӗ».

Ҫӳп-ҫӳллӗ тополь тӑрринчен
Юхатчӗ сулхӑн ҫутӑ.
Юрлатчӗ шыв ҫӑлкуҫ ҫинчен
Канмасӑр пӗр ҫеккунт та.

Хир шӑпчӗ. Ҫывӑратчӗ ял
Ирех кӗтӳ ямашкӑн.
Ӑш ыйхӑра пухса вӑй-хал
Каллех ӗҫ пуҫламашкӑн.

* * *

Вун ҫиччӗ тултарсан хӗрне
Матюк аппа каланӑ:
«Кай Мускава пиччӳ патне:
Хваттерлӗ вӑл, авланнӑ.

Кӗр вӗренме. Студентка пул.
Сан пиччӳсем вӗреннӗ.
Вӗренӳре кая ан юл –
Аҫу ҫапла пилленӗ»...

Ӗҫленӗ ашшӗ колхозра.
Пӗрре ракпа чирленӗ.

Ачисене аппа вара
Пĕччен пăхса ӳстернĕ.

Маттур вĕреннĕ кĕçĕнни,
Отличницăччĕ Валя.
Сая кайман вăл тăрăшни,
Ăста прораб вăл халĕ.

Малтан вăл Минкĕшри шкула
Пĕлӳ илме çӳрерĕ.
Мĕн пур вăя, ăс-хакăла
Вĕренĕве пиллерĕ.

Ун пичĕ çиччĕмĕш класра
Кулсассăн пăт путатчĕ.
Пур енĕпе те вăл клубра
Хисеплĕччĕ, шутраччĕ...

Кăçал ялта вăл августра
Килне килсе кăшт канчĕ.
Ун чух Россия батискаф
Кун-çулĕшĕн кулянчĕ.

Илтсессĕн вăл çав хыпара
Сасартăк чĕмсĕрленчĕ.
Ăнлантăм: халĕ те асра
Юратăвĕн поэчĕ...

* * *

...Каларĕ Валя Ванюка:
«Эп Мускаврах юлатăп.
Килсе çӳретĕп отпуска,
Ху пырасса шанатăп.

Ĕçе вырнаçăн Мускавра,
Тен, кĕрĕн вĕренме те.
Халь кай та тăрăш службăра.
Сана пĕрмай эп кĕтĕп».

Ванюк йăл кулчĕ: «Тав сана
Илемлĕ сăмахушăн.
Эппин, савниçĕм, кĕт мана,
Хĕрелмĕн юлташушăн»...

* * *

Путаççĕ пирĕн кимĕсем:
Е «Курск», е «Комсомолец».
Ма çăлаймаççĕ ыттисем?
Кала мана, эстонец!

Унта, яш чух, Эстонире
Пурнатчĕ Носов Ваня.
Чăваш кĕввисене хитре,
Таса шăрататканĕ...

...Пĕр утмăл иккĕмĕш çулта
Анне мана пĕлтерчĕ:
«Эп пултăм кўршĕри ялта,
Юлташăм тĕлĕнтерчĕ:

Ун ывăлĕ таçта флотра
Çак кунсенче пуç хунă.
Тайкка çемйи халь хуйхăра.
Çырса яман – тем пулнă».

Тăраттăм эпĕ тĕпелте.
Хам, тен, вун виççĕреччĕ.

Юн пырса çапрĕ ман пите,
Чĕрем те сехĕрленчĕ...

Анне каларĕ: «Ун ӳтне
Парса ямаççĕ имĕш».
Хĕрхентĕм эп Носовсене.
Умра хумханчĕ тинĕс...

Тулта выртатчĕ шурă юр.
Чӳречесем чиперччĕ,
Пĕрин çинче сив кайăк хур
Тӳпенелле вĕçетчĕ...

Çапла çанталăк сивĕре
Ӳкернĕччĕ фантази.
Хӳхленĕн туйăнчĕ пире
Тулти декабрь касĕ.

Шухăшлăр-ха: киле килме
Эрне юлсан çын вилнĕ!
Кĕтмен хыпар чун-чĕреме
Асаплантарчĕ вирлĕ.

* * *

...Эп авлансассăн, Пакăшра
Сад çумĕпе пыраттăм.
Тăрать-çке Валя ман умра! –
Сăмахсăрах ăнлантăм.

Матюк аппан тăванĕсем,
Эппин, курмашкăн килнĕ!
Кулаççĕ Вальăн куçĕсем –
Мана паллана илнĕ!

- Салам, Альбина упăшки!
Эп – Иванова Валя, –
Тесе пуçне таям пекки
Туса вăл пачĕ алă.

Хăй, тен, пĕр хĕрĕх çулсенче.
Хитре вăтам пӳ-силлĕ.
Ӳт пăт путни пичĕсенче
Çаплах пит килĕшӳллĕ.

Ун куçĕсем çаплах сенкер,
Вĕт хумлă хăмăр çӳçĕ.
Шел, илтеймерĕ, чиперскер,
Ванюкпала вăл... «йӳçĕ»...

Çулла килсессĕн отпуска
Кăçал мана каларĕ:
«Эх, çăлăнтăрччĕ батискаф,
Чуна илет авари»...

Манран вăл ыйтрĕ: «Носовсен
Халь килĕ хупăнман-и?
Эп хуравларăм : «Çук. Вĕсен
Чылай вĕт-ха тăванĕ...

Коли пурнать халь Шуршура».
«Эппин Ванюкăн шăллĕ?»
«Çапла. Каймасть Шупашкара,
Илемлĕ тет ял çăлĕ...»

Чăрр пăхрĕ Валя ман çине:
«Ванюк вăл – ман савниччĕ...
Флота кайсан пĕр çулхине
Теме пула-çке вилчĕ».

«Пĕлетĕп, – терĕм эп хуллен, –
Каланăччĕ Альбина,
Эрне юлсассăн çĕн çулччен
Çакланнă тетчĕ мина»...

Хĕрарăм хушрĕ: «Тинĕсре
Ман музыкăм çухалчĕ...
Çаплах манмасть ăна чĕре...
Ванюк епле аванччĕ!

Пĕрле эп кайрăм Мускава
Вăл отпуска килсессĕн.
Шанаттăмччĕ юратăва,
Çумрахчĕ ман хĕресĕм...

Ăсатрăм эпĕ Ваньăна.
Хаваслăн кайрĕ каччă.
Хам юлтăм аслă хулана,
Пĕрре те кулянманччĕ.

Çыру эп илнĕччĕ унран:
«Саватăп. Пăлханатăп.
Килетĕп тепĕр çич кунтан.
Эс кĕтессе шанатăп».

Таврăнасси эрне юлсан
Ăна инкек пĕтерчĕ,
Ик уйăх кĕтрĕм эп малтан.
Кайран ... анне пĕлтерчĕ...

Ах, тăкăнчĕ вара куççуль.
Качча епле шеллерĕм!..
Çур çул та çывраймарăм пуль,
Шав вăрттăн ĕсĕклерĕм.»

Мускав хăни калаçнăçем
Вĕт-вĕт йĕпхӳ йĕслерĕ.
Шăпланнăччĕ ват топольсем,
Хăна татах тĕпчерĕ.

«Алюшĕ пурăнать-и халь?
Алеша, вăтамскерĕ...
«Вăл Çĕн Шупашкарта. «Эмаль.
Сăрсем сутатăп»,- терĕ.

«Çулла, каникула килсен,
Тайкка аппа тĕл пулчĕ...
Манпа калаçрĕ чылайччен,
Кин вырăнне, тен, хучĕ.

Ванюк вилнишĕн кулянса
Чунне уçса пуплерĕ.
«Сана пурнаттăмăр шанса,
Кĕтеттĕмĕрччĕ», – терĕ.

Ванюкăн амăшĕ мерчен
Куççулĕсене шăлчĕ,
Уксаххăн урине хуллен
Шутаркаласа тăчĕ.

Вара каларĕ: «Ют çынна
Сана парас килмест ман.
Эс тух качча Алешăна,
Пире итлес тесессĕн»...

(Ванюкăн шăллĕ – Алексей,
Вăл та калать хут купăс.
Хваттерĕнче – мини-музей:
Нумай карап та кумпăс...)

«Ăҫтан эп Ванюка савсан
Алешăна тухайăп?
Каларăм: чун пĕрре ҫеҫ ман.
Илместĕп ун пек айăп...

Ванюк сăнне кив альбомра
Эп халĕ те упратăп.
«Пурăнтăрах ... Мĕнех вара? –
Тет манăн упăшка та...

Вăл Атăл хĕрринчи ялтан.
Чăваш – ăна пĕлетĕр...
Халь килмелле вăл Мускавран.
Ик-виҫ кунтан ҫитет-тĕр».

Пӳрте эп кĕтĕм. Ман ăшра
Манми «Варяг» янрарĕ...
Вăраххăн тăчĕ пек умра
Ҫĕр-шыв киммин пушарĕ...

...Манмастăп : Пакăш. Кăнтăрла.
Яштак моряк хаваслăн
Ал чăмăртать тăкăрлăкра
«Салам» тесе ыр саслăн.

Казаринсен ҫывăхĕнче
Ун чух ҫынсем ларатчĕҫ.
Вĕсем каска юман ҫинче
Тем шӳтлĕн калаҫатчĕҫ.

Ванюк-ҫке пулнă ҫав моряк –
Ҫап-ҫамрăк Носов Ваня!
Ун чух аса килмен «Варяг»
Тата ун капитанĕ...

Ванюк пуç хучĕ. Тинĕсре
Хут купăсĕ шăпланчĕ...
Ун ячĕ юлчĕ чĕрере,
Паянччен упранчĕ.

* * *

Салтак ячĕ – йывăр ят.
*Ваттисен сăмахĕ*

Хуньăмсен кил-çуртĕнче
Эп Альбинăпа ларатăп.
Пĕр портрет – стена çинче,
Тимлĕн ун çине пăхатăп.

Çар карттусĕпе- салтак,
Хул пуççийĕсем – пакунсăр...
Хăй вăтанчăк пек пăртак,
Тен, калать: «Эп – сирĕн тусăр»...

Тимлĕн тинкерсе куçран
Тĕмсĕлет тем пĕлтересшĕн.
Ку вăл – Мясников Иван,
Ĕмĕр хаклă ман çемьешĕн.

Калаçатпăр арăмпа.
Ку – ун ашшĕн шăллĕ – Ваня.
Фриц тухсассăн вăрçăпа
Тăкăннă асап хуранĕ...

Малтанхи сехетсенчех
Ваня вăрçăра çухалнă...
Тен, вăл вилнĕ ирхинех,
Тен, налет чухне аманнă.

Тен, вăл лекнĕ тыткăна,
Йĕплĕ лагерьте пуç хунă...
Тен, кайса партизана
Çын çиенсене тĕп тунă...

Вăл ăсатнă çырусем
Халь те арчара выртаççĕ,
Июньччен çырнăскерсем,
Юн çинчен хыпарламаççĕ...

Вĕсенче – çут ĕмĕтсем:
Салтакри юлташĕ Юнус...
Улаха çӳренисем...
Вăйă, юрату, хут купăс...

Мăшăрăм мана калать:
— Вăрçăччен Ванюк пиччемĕр
Тунă йывăçран кровать,
Халь те вăл вĕр-çĕнĕ евĕр...

Тухтăр, Ярисов хирург
Çакăн пек аса илетчĕ:
- Ванюка манма май çук,
Сăнĕпе хĕр пек хитреччĕ...

Купăса ун пек никам
Пултаруллă калаймастчĕ.
Вăл вылянă чух урам
Шутсăр селĕм янăратчĕ.

Эпĕ те начар пулман:
Сумлă каччăччĕ, студентчĕ...
Ну, унпа танлашайман,
Кашнине вăл килĕшетчĕ.

Кӗвӗҫеттӗм эп унран,
Пӗтӗм хӗр ӑна саватчӗҫ.
Хӑй пӑхсан е май пулсан
Арӑмӗ пулма шутлатчӗҫ...

Александров лаборант
Ванюка ҫапла асилчӗ:
- Ваньӑн пысӑкчӗ талант,
Вӑл чи чаплӑ гармонистчӗ.

Купӑса ун пек ӑста
Таврара та калаймастчӗҫ,
Шуршура та ҫӗр хута
Вӑл каланипе ташлатчӗҫ.

Ярӑмччӗ вӑл, чиперскер,
Ӑш ҫунтармӑшчӗ хӗрсемшӗн.
Чакӑр куҫӗсем сенкер...
Шел, таврӑнаймарӗ темшӗн...

* * *

Питӗ шел, ун купӑсне
Эпӗ упраттараймарӑм.
Ларттарса вут сарайне
Ваттарса пӗтерчӗ арӑм...

Кулянатпӑр ӗнтӗ халь,
Чавса ҫывӑх та ҫыртаймӑн.
Илсе парӑттӑм рояль –
Купӑса юсаттараймӑн.

Портретран салтак пӑхать,
Чӗрӗ пек Ванюк пиччемӗр.

Тутипе вăл, тен, калать:
«Эп вилмен, кĕтсе илсемĕр».

Тепĕр сăн ўкерчĕкре –
Вăл буденăвккăллă каччă.
Тутисем епле хитре,
Хальхилле калас тăк – мачо...

Ас тăвăм Кĕнекине
Ячĕ ун кĕмесĕр юлнă!
Кам-ши пăснă списокне?
Шутсăр пысăк çылăх тунă.

Пакăш палăкĕ çинче
Çукчĕ унăн хушамачĕ.
Майăн 9-мĕшĕнче
Чунăм кăмăлсăрланатчĕ.

Пĕлтĕр «Мясников И.И.»
Хушăнчĕ унта тирпейлĕн.
Юхрĕ реквием кĕвви...
Чунăм хĕсĕнчĕ хĕлхемлĕн.

Каçарсам, Ванюк пичче!
Эсĕ çук, эпир ташлатпăр...
Сăнару – чĕресенче.
Юрĕ-ха, эппин пурнатпăр.

* * *

Хамăр ен купăсçисем!
Сирĕн кĕввĕрсен чиперĕ –
Халăх чунĕн шăрçисем,
Пўрнĕрсен хитре çўревĕ.

Сирĕн ташă çеммисем
«Зингер» шăтăкли пек кăткăс...
Шухă туйăмлă вĕсем!
Тиркеймест ни финн, ни кăркăс.

Ыткăнуллă сирĕн стиль,
Пĕр çемми тăвата пайлă.
Вĕсенче салам, пехил...
Пурпĕр-çке эсир сăпайлă.

Ĕлĕкрен Шуршу кĕвви
Кай енсемшĕн ырă тĕслĕх.
Шерепеллĕ ун тĕвви,
Çук унта кăнттам кĕтеслĕх.

Е палан, е чей çырли,
Е июнĕн хурлăханĕ
Пиçнĕ пек, ташламалли
Кĕввĕме кĕрсе вăранĕ...

Йăлтăркка купăсăрсем –
Çĕмĕрт евĕр пускăчсемлĕ.
Сылтăм енĕн «куçĕсем»,
Кайăк пек, кашни чĕреллĕ...

Чаплă профессионал –
Ватнерти Леонтьев Коля.
Ун пек баянист сахал.
Тăсăмĕ – Артемьев Толя...

Çак ялти Смирнов Иван –
Фронтовик. Талантлă алă...
Вăл та – купăспа тăван,
Таврара ун ячĕ паллă.

Моисеев Михаил –
Аслă вăрçă ветеранĕ.
«Всю Европу покорил», –
Тет ун купăсе-баянĕ...

Каçтăр Славикĕ тата
Мĕн тери маттур ăстаччĕ.
Вăл çарти ансамбльта
Хĕмленсе баян калатчĕ.

Эп пурне те сăввăмпа
Асăнса пĕтерейместĕп.
Талантли тухать чапа,
Тăрăштăр тесе ĕçлерĕм.

Ав, Артемьев Анатуль
Купăспа – чăн-чăн асамçă:
Январьтен тăвать июль,
Уншăн пурте савăнаççĕ.

Вăл тытас пулсан баян
Пĕчченех тăвать оркестр.
Хăватне тупать таçтан,
Калайрать ырма пĕлмесĕр!

Ахальтен-и Туканаш
Йĕкĕчĕ – чăваш артисчĕ!
Вунă çул вăл – ман юлташ,
Музыка специалисчĕ.

Эп ăна яш чух шкулта
Физкультура вĕрентеттĕм.
Толя халь Шупашкарта
Ĕçленишĕн хĕпĕртетĕп.

Таврара эппин пётмен
Юрий Мясников пек ҫăлтăр...
Пирĕн ырлăхшăн куллен
Музыки вĕҫсе ун тăтăр.

Хамăр енĕн кĕввисем
Тĕнчене кайса саланччăр.
Тивĕҫ чап илме вĕсем,
Чăвашпа ҫынсем мухтанччăр!

*Куславкка,*
*2005–2006 ç.*

## Для заметок

**Михаил Александрович**
**АНДРЕЕВ**

# НИЖНЕАНЧИКОВСКОЕ ГУЛЯНИЕ

Поэма

**Издается в авторской редакции**

Компьютерный набор *Николаевой И.М.*
Верстка *Михайловой И.О.*
Дизайн обложки *Семеновой Н.В.*

Оригинал-макет издательства «Новое время»

Подписано в печать 7.06.2007.
Формат 60х84/16. Бумага офсетная.
Печать оперативная. Гарнитура Таймс.
Физ. печ. л. 4,875. Тираж 150. Заказ № 80.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г.Чебоксары, ул.М.Павлова, 50/1. Тел.: (8352) 41-27-98.

25





